К84.89(=Чув)
Ы
Ч-45144

Николай Ыдарай

# Чĕрĕп



Национальная библиотека ЧР
4-045144

К 84.89 (=Чув)
Ы1
Кир

Николай Ыдарай

# Чӗрӗп



чр

*Юмах*

Художникӗ **Н.И. Орлова**

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
2012

И-46144
Национальная библиотека
Чувашской Республики

Ёлёк-авал ăшă енче те, пирĕн тăрăхра та çанталăк пĕр пекех тăнă. Арăслансем те кунтах ашкăнса çӳренĕ, тигрсем те тиркемен ку вырăнсене, мулкач вара çуралнă çĕрĕпе мухтанмаллипех мухтаннă.

Чĕрĕп анчах чĕтресе пурăннă, мĕншĕн тесен унăн пĕвĕ мăнтăркка, урисем вăрăм пулнă, тирĕ çинче тăрăнчăк йĕпсем пачах та пулман. Хăвна ху хӳтĕлеме пĕлмесен кам сыхлĕ сана?





Пĕррехинче Чĕрĕп тус сунара тухать. Нумаях та ҫӳреймест — ун умне Арăслан тухса тăрать.

— А-а-а! — тет Арăслан Чĕрĕп ҫине кĕҫвĕҫ ҫисе ярасла пăхса. — Апат тени ансатпах тупăнчĕ-ҫке.

— Санăн сăмахусем хăратаҫҫĕ мана, — тет Чĕрĕп.

— Ан хăра эс, Чĕрĕп, ытлашши асаплантарса тăмăп сана: пĕрре кап! хыпăп та ҫăтса ярăп.

Ҫакна илтсенех Чĕрĕп тус вăрманалла вирхĕнет — аран тарса ĕлкĕрет.





Хырăм выççи Чĕрĕп туса каллех сунара хăвалать. Нумаях та çӳреймест — ун умне Тигр тухса тăрать.

— И-и-и! — текелет Тигр Чĕрĕп çине пăх-са. — Апат хăех ман тĕле килсе тухрĕ-çке.

— Санăн сăмахусем хăратаççĕ мана, — тет Чĕрĕп.

— Ан хăра эс, ытлашши асаплантарса тă-мăп: пĕрре хыпăп та çăтса ярăп.





Ҫакна илтсен Чĕрĕп часрах вăрманалла вирхĕнет — аран тарса ĕлкĕрет.

Тата тепĕр хут сунара каять Чĕрĕп. Нумаях та çӳреймест — ун умне Кашкăр тухать.

— У-у-у! — тет Кашкăр Чĕрĕпе куç хывса. — Ухмах чĕр чунсем хăйсемех ман ума килсе тухаççĕ-çке.

— Сан сăмахусем хăратаççĕ мана, — тет Чĕрĕп.

— Ан хăра эс, ытлашши асаплантарса тăмăп: тытса çурăп та çăтса ярăп.

Çакна илтсенех Чĕрĕп вăрманалла вирхĕнет — аран-аран тарса ĕлкĕрет.

«Çук, — тет Чĕрĕп хăйне хăй, — кун пек пурăнса чĕрĕ юлма çук. Мĕн тумалли-ши?» Аптранă енне Ăвăс патне ăс ыйтма пырать.

— Ăвăс тусăм, — тет Чĕрĕп, — эсĕ ăслă йывăç, никамран та пăрăнмастăн, никамран та пытанмастăн. Мана та пулăш-ха хăвăн пек пулма.

— Курмастăн-им, хăранипе хам та чĕтресе кăна ларатăп. Вĕрене патне кай, вăл ăс пама та, вĕрентме те пултарать, — ыр сунса ăсатать Ăвăс хăйĕн хăнине.





Чĕрĕп тус Вĕрене патне пырать.

— Вĕрене тус, эсĕ вăйлă йывăç, никамран та пăрăнмастăн, никамран та пытанмастăн. Мана та пулăш-ха хăвăн пек пулма.

— Курмастăн-им, сехре хăпса тухас пек сехĕрленсе ларатăп. Хăва патне кай.

Чĕрĕп тус Хăва патне пырать.

— Хăва тусăм, — тет вăл, — эс хăватлă йывăç, никамран та пăрăнмастăн, никамран та пытанмастăн, мана та хăв пек пулма вĕрент-ха.

— Курмастăн-им, тем пуласран шикленсе тĕршĕнсе ларатăп. Чăрăш патне кай, вăл сана ăс та, чăтăмлăх та пама пултарать.

Чĕрĕп тус Чăрăш патне пырать.

— Чăрăш тусăм, — тет вăл, — эсĕ чăтăмлă йывăç, никамран та пăрăнмастăн, никамран та пытанмастăн, хăвăн пек пулма





вĕрент-ха. Çăткăн чĕр чунсем кун памаççĕ.

— Юрĕ, — килĕшет Чăрăш, — анчах та ĕç ăнтăр тесен эпĕ мĕн хушнине пĕр иккĕленмесĕр тăвас пулать.

— Тăватăп! — тет Чĕрĕп.

— Чăн малтан ман çумри сухăрпа сĕрĕн, — хушать Чăрăш. Чĕрĕп васкасах сухăрпа сĕрĕнет. — Халь вара ман лăсăсем айне тĕршĕнсе вырт.

Чăрăш ластăр-ластăр силленет те Чĕрĕп çине йĕпсем тăкса тултарать.

— Ах! — тет Чăрăш кăштахран. — Авă Арăслан кунталла сулăнать, санăн пĕвў курăнать — тĕршĕн çумарах!

Чĕрĕп тус ăна итлет.

— Ах! — тет Чăрăш кăштахран. — Акă Тигр кунталла çывхарать, санăн пуçу курăнать — лăпчăн лайăхрах!

Чĕрĕп тус тата хытăрах тĕршĕнет.







— Ах! — тет Чăрăш кăштахран. — Авă Кашкăр кунталла талпăнать, санăн урусем курăнаççĕ — пытан лайăхрах!

Чĕрĕп тус тĕршĕне-тĕршĕне пĕчĕкленсех каять, урисем те кĕскелеççĕ. Чăрăш йĕппи-сем вара Чĕрĕп çине тирĕнсех лараççĕ. Мăн-тăркка чĕрĕпрен паянхи пек чĕрĕп пулать те тăрать.

Пĕвĕпе пĕчĕк пулсан та Чĕрĕп текех хă-равçă мар ĕнтĕ: никамран та пăрăнмасть, никамран та пытанмасть. Хăрушă чĕр чунпа тĕл пулсан йĕплĕ çăмха пулса чăмăртанать. Тытса пăх-ха вара ăна!





УДК 821.512.111-93
ББК 84 (2Рос=Чув)6-4
Ы 28

*Литературно-художественное издание*

Для детей дошкольного возраста

**Николай Васильевич Ыдарай**

# Чĕрĕп
# Ёжик

Сказка

*На чувашском языке*

Редактор *О.Л. Федорова*
Художник *Н.И. Орлова*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Н.В. Вечеркина*
Компьютерная верстка *М.В. Филипповой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 14.03.12. Формат 70х90 1/16. Бумага
офсетная. Гарнитура Букварная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 1,17.
Учетно-изд. л. 1,33. Тираж 1000 экз. Заказ № 374. Изд. № 16.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография № 1»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

**ISBN 978-5-7670-1904-5**

© Чувашское книжное издательство, 2012

110.00

Ч-46844

Национальная библиотека
Чувашской Республики

